28-мĕш çул тухăть. Хакĕ 20 пус.

1945
МАЙ
6
ВЫРСАРНИКУН
86(6837) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАСАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Белоруссири 2-мĕш фронт çарĕсен командующине

Совет Союзĕн Маршалне РОКОССОВСКИЕ

Фронт штабĕн начальникне

Генерал-полковника БОГОЛЮБОВА

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем паян, майăн 5-мĕшĕнче, СВИНЕМЮНДЕ хулине—нимĕçсен Балтика тинĕсĕ хĕрринчи пысăк портне тата тинĕс-çар базине—туртса илнĕ.

СВИНЕМЮНДЕ портне тата тинĕс-çар базине туртса илесшĕн çапăçнă чухне çаксем чапа тухнă: РОМАНОВСКИЙ генерал-лейтенантăн, ФЕДЮНИНСКИЙ генерал-полковникăн, ЛЯПИН генерал-лейтенантăн, КОКОРЕВ генерал-лейтенантăн, КОРОТКОВ генерал-майорăн, ФРОЛЕНКОВ генерал-майорăн, ПОЛЕНОВ генерал-лейтенантăн, ФЕТИСОВ генерал-майорăн, ХУДАЛОВ генерал-майорăн, РОГОВ полковникăн, ГАФЬЕВ полковникăн, КОРШУНОВ полковникăн, ПОЛУВЕШКИН полковникăн, КОСОВ полковникăн, БОРШЕВ генерал-майорăн, ЛЯШЕНКО генерал-майорăн, БЕЛОСКУРСКИЙ генерал-майорăн, ДЕМИДОВ генерал-майорăн, ЧЕСНОКОВ полковникăн, КОЛЧАНОВ генерал-майорăн çарĕсем; артиллери генерал-майорĕн БЕЗРУКАН, артиллери генерал-майорĕн КАЗАКОВАН, БКЛОВ полковникăн, артиллери генерал-майорĕн ГНИДИНАН, артиллери генерал-майорĕн КОРОЧКИНАН, ШЕТКИН подполковникăн, БАБАНОВ майорăн, АЛИМБАЕВ подполковникăн, БАЙБУЗЕНКО майорăн, АНАНИЧ подполковникăн артиллерисчĕсем; ОБРОКОВ полковникăн, ДОРОНИН полковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн ВЕРШИНИНАН, авиаци генерал-полковникĕн С.МОХИНАН, авиаци генерал-майорĕн АЛЕКСЕЕВАН, авиаци генерал-майорĕ СМИРНОВАН, авиаци генерал-лейтенантчĕн БАЙДУКОВАН, авиаци генерал-лейтенантчĕн ОСИПЕНКАН, авиаци генерал-майорĕн БОРИСЕНКАН, авиаци генерал-майорĕн ТУПИКОВАН, авиаци генерал-лейтенантчĕн ЛОГИНОВАН, авиаци генерал-лейтенантчĕн НЕСТЕРЦЕВАН, авиаци генерал-лейтенантчĕн СЧЕТЧИКОВАН, авиаци генерал-майорĕн ГЕТЬМАНАН, авиаци генерал-майорĕн ЛЕБЕДЕВАН, СМОЛОВИК полковникăн, КАЛУГИН полковникăн, ГРИШЕНКО полковникăн, ВИНОГРАДОВ полковникăн, ВУСС полковникăн, ТИХОМИРОВ полковникăн, ВОЛКОВ полковникăн, ДОДОНОВ полковникăн, ПОКОЕВОЙ полковникăн, ЯКУШИН полковникăн, ПУШКАРЕВ полковникăн, ОСИПОВ полковникăн, авиаци генерал-майорĕн ФЕДОРОВАН, КУРОЧКИН полковникăн, ЛЕСЕНКОВ подполковникăн, УСАЧЕВ подполковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн ЧЕПУРОВАН, КУРОВ полковникăн, БАБАЕВ полковникăн, КОКОРИН полковникăн, ШТЕЙН полковникăн саперĕсем; КОРПЛЯКОВ полковникăн, БАХИЛИН полковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса аварас тесе, СВИНЕМЮНДЕ портне тата тинĕс-çар базине туртса илессишĕн пысăк çапăсусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе часĕсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, майăн 5-мĕшĕнче, 22 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, çĕр çирĕм тăватă тулăлла вунникĕ хут пăр харăс персе, БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, СВИНЕМЮНДЕ портне тата тинĕс-çар базине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, СВИНЕМЮНДЕ портне тата тинĕс-çар базине туртса илессишĕн пысăк çапăсусенче пулăшнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТАП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе инкека пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи майăн 5-мĕшĕ. № 362.

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАЙĂН 4-М ШĔНЧИ ОПЕРАТИВНАЙ СВОДКА

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем ШТЕТТИН хулинчен сурçĕртерехре ДИВЕНОВ проливĕ урлă иăсна та ВОЛЛИН хулине ЛЮСКОВ, КЕРТЕНТИН, ЯРМБОВ, КОДРАМ, РЕБЕРГ, ГРОСС МОКРАТЦ, КЛАЙН МОКРАТЦ, ЗОЛЬДЕМИН ялĕсене туртса илнĕ. ВИТТЕНБЕРГЕ хулинчен сурçĕртерехре фронт çарĕсем çаплах малалла тапăнса пынă, ШТЕРНБЕРГ, ЛЮБЦ, ПАРХИМ, ГРАБОВ хулисемпе ДАБЕЛЬ, ДЕМЕН, ГОЛЬДЕНБОВ, РАДУН, ШПОРНИТЦ, БЛИВЕНСДОРФ, ЦИРЦОВ, ЛЕНЦЕН ятлă пысăк ялсене туртса илнĕ.

Майăн 3-мĕшĕнче фронт çарĕсем 22.000 ытла нимĕç салтакĕпе офицерне тытăкăна илнĕ тата аэродромсенче тăшманăн 240 самолетне тытса илнĕ.

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем БРАНДЕНБУРГ хулинчен кăнтăртарахра малалла тапăнса пынă, БЕЛЬЦИГ, ВИЗЕНБУРГ, НИМЕГК КОСВИГ хулисемпе ГЕТТИН, КРАНЕ, ГОЛЬЦОВ, ГРЕБЕН, ГЕРЦКЕ, РЕЕТЦ ятлă пысăк ялсене çапăçса туртса илнĕ. Майăн 3-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче фронт çарĕсем 23.700 нимĕç салтакĕпе офицерне тытăкăна илнĕ тата аэродромсенче тăшманăн 57 самолетне тытса илнĕ. Каярахпа палăрнă тăрăх, Берлинра тата çаксем тытăкăна лекнĕ: БЕРЛИН хулин полицей-президенчĕ полиции генерал-лейтенантчĕ ГЕРУМ, Берлинри полици начальникĕ полици генерал-майорĕ ХАЙНБУРГ, импери канцелярийĕн хуралăн начальникĕ эсэсовецсен бригада фюрерĕ МОНКЕ, Берлин гарнизонĕн санитари службин начальникĕ медицина службин генерал-майорĕ ШРЕЙБЕР, Берлин хулине Бранденбург провинцинчи Хĕрлĕ хĕрес руководительĕ медицина службин генерал-лейтенантчĕ БРЕКЕНФЕЛЬД, 18-мĕш мотодивизи командирĕ генерал-майор РАУХ.

УКРАИНАРИ 4-мĕш фронт çарĕсем хĕвеланăç Карпат тăвĕсен тăрăхĕнче çаплах малалла тапăнса пынă, ВИГШТАДТЛЬ (ВИСКОВ) хулине ПУСТЕЙОВ, МОШНОВ, БРУШПЕРК, ДОМАСЛАВИЦЕ, ОСТРАВИЦЕ, ГОРНАЯ БЕЧВА, ВЕЛИКИЕ КАРЛОВИЦЕ, ГОВЕЗИ ятлă пысăк ялсене çапăçса туртса илнĕ. Майăн 3-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче фронт çарĕсем 1.000 ытла нимĕç салтакĕпе офицерне тытăкăна илнĕ.

УКРАИНАРИ 2-мĕш фронт çарĕсем БРНО хулинчен хĕвелтухăçнерехре ЛУЖНА, ПОЗДЕХОВ, ЯСЕННА, ВИЗОВИЦЕ, СЛУШОВИЦЕ, ЛУКОВИЦЕ, КВАСИЦЕ, ТЕШНОВИЦЕ, ВАЖАНЫ, ЗЛОБИЦЕ, КРЖЕНОВИЦЕ ятлă пысăк ялсене çапăçса туртса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче палăрăлăшăнусемех пулман.

Майăн 3-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 50 танкĕпе хăй тĕлĕнĕн çурекен туппине çĕмĕрсе тăкнă.

Вагонсем юсакан завод Хĕрлĕ Ялав илнĕ

КАНАШ. Вагонсем юсакан завод Май уявĕ умĕнхи ăмăртура пысăк çитĕнӳ турĕ. Март уйăхĕнчи ĕçсемшĕн ВЦСПС-па Çулĕĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çурекен Хĕрлĕ Ялавне илчĕ. Апрель уйăхĕнчи программăна 27 кун хушшинче тултарчĕ. Çапла вара, завод коллективĕ Май уявĕ ячĕпе илнĕ обязательствăна чыслăн пурнăçларĕ.

Цехсем хушшинчи ăмăртура вагонсемпе кустăрмасем тăвакан цехсем, механически цех мала тухнă. Вĕсем уйăхри плана срокчен тата ытлашшипех тултарнă. Ыйăс каскалакан, тимĕр-тăмăр шăратакан тата тимĕрçĕ цехĕсем те апрельре ăнăçлă ĕçленĕ.

Май уявне производствăлла парне кӳрессишĕн кĕрешсе, заводри чылай стахановецсем хăйсен ĕç тухăçлăхне ӳстерĕ. Кустăрмасем тăвакан цехри токарь Борисов уйăхри нормăна—300 процент, токарь Давиденко—350 процент, вагонсем тăвакан цехри слесарь орденоносец Журба—450 процент тултарнă.

Нормăран икĕ хут тухăçлăрах ĕçлеççĕ

СЕНТЕР. Янăмри «Дружба» промартель уяв ячĕпе илнĕ обязательствăна пурнăçланă: апрельти плана 145 процент тултарнă, планран иртнерсе 20.000 тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Артельте Столяров, Васильев тата Искандаров стахановецсем нормăран икĕ хут тухăçлăрах ĕçленĕ.

Азербайджан ССР-ĕн Верховный Совечĕн Президиумне Азербайджан ССР-ĕн Халăх Комиссарĕсен Советне Азербайджанри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитетне

ВКП(б) Центральный Комитечĕ тата СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Азербайджанра совет власĕ пулни çирĕм пилĕк çул тултарнă кун Азербайджан ССР-ĕнчи рабочисене, колхозниксене тата интеллигенцие тăванла салам ярассĕ.

Чĕрĕк ĕмĕр каярах Азербайджанри ĕçлыннисем, Бакури пролетариат пуçпулса пынипе тата большевиксен партийĕ ертсе пынипе, муссаватистсен буржуалла-националистла правительствине сирпĕтсе антарчĕç те Азербайджанра Совет власĕ туса хучĕç.

Совет власĕ ют çĕршыв капиталисчĕн, патша чиновникĕсен, бексемпе ханĕн пусмăрне, Азербайджанри рабочисемпе крестьенсене ĕмĕрсем хушши чуралантарса пуранăскерне, тĕп турĕ. Азербайджанри халăхсем пĕр-пĕринпе хирĕçсе пуранăнине пĕтерсе тăкрĕ. Совет власĕ вăхăтĕнче, ленинла-сталинла наци политикине пурнăçа кĕртсе пынине пула, Азербайджан патша империйĕн патриархалла-феодалла, кая тăрса юлнă çĕршывĕнчен чечекленсе ӳсекен социализмла республика пулса тăчĕ. Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе, асла вырăс халăхĕ пулăшнипе, Азербайджан халăхĕ хуçалăхпа культурăн пур пайĕсенче те çав тери пысăк çитĕнӳсем турĕ. Республикăра нефть кăлармалли темиçе пин çĕнĕ шăтăка ĕçе янă, нефтьрен тĕрлĕрен продуктсем тăвакан промышленноçа вăйлăн аталантарнă. Азербайджан механизацилене социализмла ялхуçалăхĕн çĕршывĕ, Совет Союзне çĕр мамăкĕ парса тăракан пысăк база пулса тăчĕ. Азербайджанра чăннинех ĕнтĕ культурăлла революци пулчĕ, е хутиĕлменлĕхе пĕтерчĕ, темиçе çĕр вăтам шкул, Наука академийĕ, темиçе вунă аслă шкул тата паукăна тĕпчев институчĕсем уçнă, Азербайджан халăхĕн интеллигенцийĕн нумай пысăк кадрĕсем çитĕнчĕç.

Совет власĕ Азербайджан хĕрăрăмне ирĕке кăларчĕ, ăна çĕршывăн государство, хуçалăх тата культура строительствине явăстарчĕ.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче Азербайджан ĕçлыннисем тăшмана çĕнтерес ĕçе хăйсен вăйне пачĕç. Азербайджан халăхĕн ывăлĕсем Хĕрлĕ Çарта сирĕн Советла Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама нăхăнманлăхĕшĕн паттăрăн çапăçрĕç. Нефтьлĕ Бакун рабочийĕсем, инженерĕсемпе техникĕсем вăрçă вăхăтĕнчи йывăр условисенче пирĕн Çара, промышленноçпа ялхуçалăхне çителĕклĕ таран горючи парса тăррĕç. Азербайджанри колхозниксем ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстерес тата вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕпе чылай пысăк çитĕнӳсем турĕç.

ВКП(б) Центральный Комитечĕ тата ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Азербайджан халăхĕ нимĕçсен фашистла захватчикĕсене тĕпĕпех аркатса тăкас ĕçе вĕçлессишĕн тата Совет Союзĕн çарпа экономика тĕлĕшĕнчи вăй-хăватне малалла çирĕплетессишĕн хăйĕн пĕтĕм вăйне парассине шанса тăррĕç.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ.

ВКП(б) Центральный Комитечĕ.

ЕЦСПС Президиумĕ йышăннă постановлени

Государствăн Тăвăсттăмĕш Военнăй Заемне çыхăнас ĕçе профсоюз организацийĕсем хăтлăнасси çинчен

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕн Президиумĕ профсоюзсен мĕнпур организацийĕсене—профсоюзсен центрти, крайсенчи, областсенчи, фабрикăсемпе заводсенчи тата вырăпти комитечĕсене — Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемне рабочисемпе работницăсем, инженерсем, техниксем тата служащисем, Совет Союзĕнчи мĕнпур ĕçлыннисем хушшинче вырнаçтарас ĕçе иртернĕ çĕре активлăн хутшăнма хушать.

Профсоюз организацийĕсем палăракан заемран кĕнĕ укçа-тенкĕ пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне гитлерла Германие хăвăртрах аркатса тăкманкăн пулăшма кайнине, пирĕн Тăван çĕршыва вăрçă кӳрсе хăварнă сурансенчен хăвăртрах тӳрлетме, пирĕн аслă Совет государствин вăй-хăватне татах та ӳстерме кайнине ăнлантарса памалла.

Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемне мĕнле тĕллевпе кăларнине тата вăл вăрçăна политика тĕлĕшĕнчен мĕнле вырăн йышăнса тăнине ăнлантарса парса, профсоюз организацийĕсен хăйсен умне пĕрремĕш хут паллаштарнă.

б) Кронштадт хулинчи Попов ячĕпе тăракан çыхăну шкулĕн çурчĕ çине; унта А. С. Попов 1883 çултан пуçласа 1901 çулччен ĕçленĕ, унтах вăл радио шухăшласа кăларнă;

в) Ленинградри В. И. Ульянов (Ленин) ячĕпе тăракан электротехника институчĕн çурчĕ çине; А. С. Попов 1905 çулта çав институтăн директорĕ пулса ĕçленĕ;

г) Ленинград хулинчи Васильевски утрав çинчи Съездовски линири 31-мĕш номерлĕ çурт çине тата Кронштадт хулинчи Посад урамĕнчи 25-мĕш номерлĕ çурт çине; çав çуртсенче А. С. Попов пурăннă.

7. А. С. Попов ячĕпе стипендисем памалла тăвас:

а) Ленинградри В. И. Ульянов (Ленин) ячĕпе тăракан электротехника институтĕнче—студентсене уйăхне 400-шер тенкĕ памалли икĕ стипенди тата аспирантсене уйăхне 800-шер тенкĕ памалли пĕр стипенди;

б) Çыхăну институтĕнче—студентсене уйăхне 400-шер тенкĕ памалли икĕ стипенди тата аспирантсене уйăхне 800-шер тенкĕ памалли пĕр стипенди;

в) Мускаври çыхăну инженерĕсен институтĕнче—студентсене уйăхне 400-шер тенкĕ памалли икĕ стипенди тата аспирантсене уйăхне 800-шер тенкĕ памалли пĕр стипенди.

8. РВ—70 радиостанцине тата Çыхăну Халăх Комиссариачĕн Центральнăй музейне А. С. Попов ятне парас.

9. РСФСР Совнаркомĕ çумĕнчи Çутăç Комитетне Оборона Халăх Комиссариачĕне, Хĕрлĕ Çăран Çыхăну управленийĕне тата Çыхăну Халăх Комиссариачĕне пĕрле 1945 çулхи майăн 7-мĕшĕ тĕлне Мускаври музейре выставка тума хушас.

10. Çаксене персональнăй пенсисем памалла тăвас: А. С. Поповăн хĕрĕсене — Раиса Александровна Поповăна тата Екатерина Александровна Кьяндскаяна уйăхне 500-шер тенкĕ, А. С. Поповăн ывăлĕн хĕрне—Мария Владимировна Андреевăна аслă шкултан вĕренсе тухиччен уйăхне 500-шер тенкĕ.

11. Радио шухăшласа кăларни 50 çул çитнĕ тĕле çакăн пек кĕнекесем пичетлесе кăлармалла тăвас: А. С. Поповăн историллĕ документчĕсен сборникĕ, А. С. Поповăн биографийĕ, «Радио 50 çул тултарчĕ» ятлă наукăллă-техникăллă статьясен пухăвĕ, радио аталанса пыни çинчен ăнланмăлла çырнă кĕнеке. (ТАСС).

СССР Совнаркомĕнче

А. С. Попов радио шухăшласа кăларни 50 çул çитнине паллă тăвасси çинчен

Вырăс ученăйĕ А. С. Попов радио шухăшласа кăларни 1945 çулхи майăн 7-мĕшĕнче 50 çул тултарнине паллă тумашкăн СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăннă:

1. Ленинград хулинче А. С. Попов памятникне лартас.

2. Гогланд утравĕ çинче, çынсене çăлмашкăн А. С. Попов системин радиостанцийĕпе тĕнчере пĕрремĕш хут усă курнă вырăнта, обелиск лартас.

3. Радио шухăшласа кăларакана А. С. Попова ĕмĕр маннăлла мар тăвас тесе, А. С. Попов ячĕпе памалли ыттăн медаль тăвас. Радио тĕлĕпе тунă питĕ чаплă изобретенисемпе наукăлă ĕçсемшĕн совет ученăйĕсемпе ют çĕршывсенчи ученăйсене çуллен пĕр медаль памалла тăвас.

Çав медале СССР Наука академийĕн памалла. СССР Наука академине А. С. Попов ячĕпе памалли медалĕн положенине сырса хатĕрлесе СССР Совнаркомне тăратма хушас.

4. Радио халăхăн культурăлла тата политикăлла пурнăçĕнче тата çĕршыва хӳтĕлес ĕçре питĕ пысăк вырăн йышăнса тăнине шута илсе, хамăр государствăри наукăпа техника радио тĕлĕпе тунă çитĕнӳсем çинчен массăсене ăнлантарса парас тесе тата аннă массăсем хушшинче радио юратакансене хавхалантарас тесе, çуллен майăн 7-мĕшĕнче «Радио кунĕ» ирттермелле тăвас.

5. Наукăпа техника тĕлĕпе, радио хатĕрĕсене туса вĕсемпе усă курас тĕлĕпе тата радио сарас ĕçе организацилес тĕлĕпе çитĕнӳсем туса, радио ĕçне аталантарма пулăмпа çынсене наградăламашкăн «Хисеплĕ радист» ятлă значок тăвас.

«Хисеплĕ радист» значока Оборона Халăх Комиссариачĕ, Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссариачĕ, Çыхăну Халăх Комиссариачĕ, Электропромышленность Халăх Комиссариачĕ тата СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Радиофикацине радиовещани комитечĕ парассĕ.

А. С. Попов радио шухăшласа кăларни 50 çул çитнине паллă тăвакан комитета «Хисеплĕ радист» ятлă значокăн положенине çырса хатĕрлеме хушас.

6. Çак çуртсем çине мемориальнăй хăмасем çапса хурас:

а) Ленинградри университетăн физика институтчĕн çурчĕ çине; çав çуртра А. С. Попов 1895 çулхи майăн 7-мĕшĕнче çынсене хăй шухăшласа кăларнă радиопа пĕрремĕш хут паллаштарнă.

Аманнă боецсемшĕн куллен тăрăшаççĕ

Совет тылĕнчи ĕçлыннисем Хĕрлĕ Çăран паттăр воинĕсемшĕн куллен ăшă кăмăлпа тăрăшнине боецсем фронтра та, госпитальсенче те аван туяççĕ. Семенов майор начальник заместителĕ пулса ĕçлекен госпитальте аманнă боецсен канăçне лайăх йĕркелес тĕлĕпе шефа илнĕ организацисемпе учрежденисем лайăх ĕçлеççĕ. Боецсем выртакан кашни палатăрах, радио, шашка-шахмат, домино пур. Почтăра ĕçлекенсем кашни кунах çĕнĕ хаçат-журналсем илсе пыраççĕ. Госпитальри клубра каçсерен çĕнĕ кинокартинăсем кăртаççĕ.

Аманнă боецсем Чăвашсен Государство Академи театрĕн артисчĕсем, филармони тата художествăллă пултарулăх кружокĕсем ирттернĕ концертсене юратса пăхаççĕ. Вăл концертсене клубра кăна мар, йывăр аманнисем валли уйрăм палатăсенче те иртереççĕ. Чăвашсен тава тивĕçлĕ артистки М. Тихонова юлташ виçĕ çул хушши ытла ĕнтĕ госпитале тăшăшах çӳрет. Вăл клубра тата уйрăм палатăсенче темиçе хутчен те концертсем иртеттернĕ. Аманнă боецсемпе офицерсем М. Тихонова юлташа пысăк хаваслăхпа кĕтсе илеççĕ.

Д. ЛЯШКО.

ÇĔНТЕРӲ ЗАЕМĔ

Совет правительстви питех те кирлĕ пулнă çĕнĕ заем çинчен: çĕршыва хӳтĕлес ĕç валли укçа-тенкĕ çĕнĕрен хуть-шăнтарас шутпа, Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемне кăларчĕ.

Çĕнĕ заема кăларни çирĕп паттăр Хĕрлĕ Çар çапăçу хирĕнче тунă историллĕ пысăк çĕнтерӳсемпе пĕр вăхăтра килчĕ. Польшăна Венгрие пĕтĕмĕшпе, Чехословакине Австрин чылай пысăк пайĕсене ирĕке кăларнă, Хĕвелтухăç Пруссине Померание пĕтĕмпех, Бранденбург провинцийĕн ытларах пайне туртса илнĕ, Германин тĕп хулине—Берлина парантарса, ун çине çĕнтерӳ ялавне çĕклесе лартнă. Халĕ ĕнтĕ çапăçусем Германин вăтаçĕрĕнче, Берлинран чылай инçетре, Эльба шывĕ çинче пыраççĕ. Халĕ ĕнтĕ çирĕп Хĕрлĕ Çарпа союзниксен çарĕсем пĕрле нимĕçсен хĕçпăшаллă вăйĕсене пĕтĕмпех парăнтарассишĕн, юнлă вăрçа хăвăртрах вĕçлессишĕн çапăçаççĕ. Германи империалисчĕсем пуçласа янă пĕтĕм тĕнчери вăрçă пĕтсе пырать.

Çак историллĕ çĕнтерӳсене тăвас ĕçе Хĕрлĕ Çарпа пĕрле тылри ĕçлыннисем те сахал мар вăй хунă. Вăрçă тăватă çул тăсăлать пулин те, çирĕп халăх хуçалăхĕ ӳссе тата çирĕпленсе пырать, нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи ялсемпе хуласем хăвăрт юсанса ура çине тăраççĕ.

«Çакă вăл большевиксен аслă партийĕ хавхалантарса пыракан пирĕн çĕршыври рабочисемпе колхозниксем, совет интеллигенцийĕ, хĕрарăмсемпе çамрăксем геройла вăй хурса ĕçленин результатчĕ пулса тăрать» (И. Сталин).

Аслă çулпуç тылри работниксен ĕçне çакăн пек пысăка хурса хаклани вĕсен ĕçлес кăмăлне татах та çĕклентерет. Тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çара ĕçпе те, укçапа та пулăшма хавхалантарать.

Совет правительстви Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемне кăларасси çинчен майăн 4-мĕшĕнче радиопа пĕлтернине пирĕн ĕçлыннисем патриотла пысăк кăмăллă кĕтсе илчĕç. Мĕншĕн тесен вĕсем çак заем укçи çĕршыва хӳтĕленĕ çĕре кайнине, çĕнĕ заем—татăклă çĕнтерӳ заемĕ пулса тăнине лайăх ăнланаççĕ. СССР Верховный Советĕн нумай пулмасть пулса иртнĕ XI-мĕш Сессийĕ государствăн 1945 çулхи бюджетне 305,3 миллиард тенкĕлĕх йышăнса çирĕплетрĕ. Вăл шутран 45,1 процентне, е 137,9 миллиард тенкине, вăрçă расхочĕсене витнĕ çĕре уйăрма палăртнă. Хĕрлĕ Çара кирлĕ хĕçпăшала, туптире, апат-çимĕçе тата ытти япаласене туса кăларма укçа нумай каять. Халăх хуçалăхне малалла аталантарса пыма, ĕçлыннисен пурнăçне лайăхлатма, культурине ӳстерме те укçа сахал мар кирлĕ.

Бюджетпа çирĕплетнĕ укçа-тенкĕ, паллах, хамăр çĕршывра тупас пулать. Государство бюджечĕ, тĕпрен илсен, пирĕн халăх хуçалăхĕ—промышленность, транспорт, çĕрçĕ тата суту-илӳ паракан укçаран тытăнса тăрать. Анчах та государство бюджетĕнче халăх обязательнăй йĕркепе тӳлекен тата хăй ирĕкĕпе хывакан укçа та пысăк вырăн йышăнса тăрать. Халăх хăй ирĕкĕпе укçа памалли майсенчен пĕри вăл—государство заемĕсене сырăнса илни пулать.

Совет правительстви кăларнă заемсене пирĕн ĕçлыннисем яланах кăмăлласа кĕтсе илсе, пысăк çĕкленӳне сырăнаççĕ. Ĕçлыннисен заем сырăнса илес тĕлĕшри активлăхĕ Отечественнăй вăрçă çулĕсенче татах та ӳсрĕ. Сăмахран, иртнĕ çулта Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемне, 25 миллиард тенкĕлĕх кăларнăскерне, Совет Союзĕнче 29 миллиард тенкĕлĕх вырнаçтарнă. Пирĕн Чăваш республикинчи ĕçлыннисем, колхозсемпе промартельсем ăна 183 миллион тенкĕлĕх сырăнса илчĕç.

Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемĕ питти заемсем хушшинче расна вырăн йышăнса тăрать. Вăл—чăннипех те çĕнтерӳ заемĕ. Ăна вырнаçтарас ĕç пирĕн çĕршыври

Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемне кашни ĕççыннисем çырăнса илтĕр!

Çĕнĕ заема майăн 6-мĕшĕ тĕлне 111.563.00 теннĕлĕх сарнă

Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемне сарас ĕç республикăра ăнăçлăн пырать. Майăн 6-мĕшĕ тĕлне пурĕ 111.563.000 теннĕлĕх сарнă. Вăл шутран: рабочисемпе служащисем хушшинче —37.484.000 теннĕлĕх, колхозниксемпе единоличниксем хушшинче—63.693.000 теннĕлĕх, колхозсемпе премартельсенче 10.386.000 теннĕлĕх вырнаçтарнă.

Заем укçине республикипе пурĕ 31.353.000 теннĕ пухса перекет кассисене хывнă.

Çĕнĕ заема сарас тата укçине пухас тĕлĕшпе Вăрмарпа Красноармейски районсем малта пыраççĕ. Вĕсем заема бюджетпа палăртнинчен ытларах сарнă. Вăрнар районĕнче пурĕ 4.846.000 теннĕлĕх вырнаçтарнă, укçине 2.039.000 теннĕ пухнă. Красноармейски районра 4.191.000 теннĕлĕх сарса, укçине 1.604.000 теннĕ пухса панă. Заем çырăнас ĕç Муркаш, Куславкка, Шăхасан, Чурачăк, Сĕнтĕр тата Вăрмар районĕсенче те лайăх пырать.

Канаш, Шупашкар тата Çĕмĕрле хулисем те заема бюджетпа пăхнинчен иртерсе вырнаçтарнă.

Анчах та заем сарас ĕçре юлса пыракан районсем те пур. Вĕсен шутне Шăмăршă, Кувакино, Йĕпреç районĕсем кĕреççĕ. Заем ĕçĕнче иртнĕ çулта малта пынă Сĕнтĕрвăрри районĕ те кăдал юлса пырать.

Татăклă çĕнтерӳ валли

ÇĔРПУ, майăн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри ĕççыннисем Правительство çĕнĕ заем кăларасси çинчен пĕлтернине майăн 4-мĕшĕнче радио тăрăх итлерĕç. Репродукторсем умне колхозниксем, хулари предприятисемпе учрежденисенчи рабочисемпе служащисем пухăнчĕç. Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемне кăларасси çинчен радиопа итленĕ хыççăнах ĕççыннисем пухăвĕсем пулса иртрĕç, çĕнĕ заема вырнаçтарас ĕç пуçланчĕ.

Районра Тăваттăмĕш Военнăй Заема пĕтĕмпе малтанхи кунах 2.748.000 теннĕлĕх сарнă, 929.000 теннине çийĕнчех парса татнă. Заем сарас ĕç уйрăмах «Балтиец» колхозра ăнăçлă иртнĕ, унти колхозниксем 50.000 теннĕлĕх çырăнса укçине те парса татнă. Колхоз председателĕ И. Васильев хăй 5.000 теннĕлĕх çырăнса укçине çийĕнчех хывнă. «Красный бригадир» колхоз членĕсем те çĕнĕ заема пысăк çĕкленӳпе кĕтсе илнĕ, вĕсем 75.000 теннĕлĕх çырăнса, укçине çийĕнчех тӳленĕ. Ку колхоз председателĕ Н. Ферапонтов 3.000 теннĕлĕх çырăннă, укçине те парса татнă. Çак колхозри колхозница А. Порфирьева заем илме 3.100 теннĕ укçа панă, Совет Союз Геройĕн амăшĕ А. Силантьева 2.500 теннĕлĕх çырăнса укçине те парса татнă.

Нĕрĕш ял Советĕнчи «Красный Октябрь» тата «Малалла» колхозсенче те заем ăнăçлăн сарăлнă. Нĕрĕш ял Совечĕн председателĕ, Отечественнăй вăрçă инваличе В. Прокопьев заема 1.250 теннĕлĕх çырăнса укçине те хывнă. «Малалла» колхоз председателĕ С. Федоров 1.500 теннĕлĕх, «Красный Октябрь» колхозри бригадир Г. Васильев 1.850 теннĕлĕх çырăнса укçа хывнă.

Хулари учрежденисенче заем сарас ĕç уйрăмах Заготскот, Уполнаркомзаг конторисенче, райисполкомра ăнăçлăн пулса пырать.

Д. МИТЬКОВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Васильев юлташ 15.000 теннĕлĕх çырăнса укçине те тӳленĕ

ШĂХАСАН, майăн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри ĕççыннисем Тăван сĕршыв обороннине тĕреклетме кирлĕ Военнăй Заема чĕререн хавасланса кĕтсе илчĕç. Çак çĕнĕ заема районĕпе 2.700.000 теннĕлĕх çырăннă, вăл шутран 2.300.000 теннĕ укçине тӳленĕ те ĕнтĕ.

Çĕнĕ заема вырнаçтарас ĕç «Прожектор» колхозра ăнăçлăн иртрĕ. Кунта колхозниксем пурĕ 72.000 теннĕлĕх çырăннă. Укçине те пĕтĕмпех пухса панă. Колхоз председателĕ, Отечественнăй вăрçă инваличе Р. Иванов юлташ 5.000 теннĕлĕх çырăннă.

Тăрăнти «Красный партизан» колхоз членĕсем те çĕнĕ заема 70.000 теннĕлĕх вырнаçтарса, укçине çийĕнчех парса татнă. Колхоз председателĕ, Отечественнăй вăрçă инваличе И. Васильев юлташ 15.000 теннĕлĕх çырăнса, укçине ăйăтах тӳленĕ.

Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхозра заема 80.000 теннĕлĕх сарнă, укçине çийĕнчех районри перекет кассине хывнă. Колхоз председателĕ Степанова юлташ 6.000 теннĕлĕх, Каховская тата Иванова бригадирсем 1.500-шер теннĕлĕх çырăнса илнĕ.

В. ВЕСЕЛОВ.

Пурте пĕр çын пек çырăнаççĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, майăн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). «Агроном» колхоз членĕсем Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемĕ тухни çинчен ял Советĕнче репродуктор умне пухăнса итлерĕç. Савăнтах митинг пулса иртрĕ. Митингра чылай колхозниксем çĕнĕ заема ырласа сăмах тухса калармĕç. Колхозник В. Чумаков юлташ пуринчен малтан 2.000 теннĕлĕх çырăнчĕ. В. Шихреев колхозник 1.700 теннĕлĕх, П. Железнов 1000 теннĕлĕх çырăнса, укçине çийĕнчех тӳлерĕç.

Колхозра пурĕ 83.000 теннĕлĕх çырăннă. Вăл шутран 38.000 теннĕ укçине тӳленĕ.

Т. ТИХОНОВ.

Тĕштырăсене акса пĕтерес тĕлĕшпе фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăх

Çураки ĕçĕсем районсенче мĕнле пыраççĕ

Майăн 5-мĕшĕ тĕлне илнĕ сведенисем тăрăх, çураки ĕçĕсем Шăхасан районĕнче ăнăçлă пыраççĕ. Çак район çураки планне 42 процент тултарнă. «Красный партизан» колхоз (председателĕ Васильев юлташ), Чкалов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Дубровин юлташ), «Новая жизнь» колхоз (председателĕ Павлов юлташ) пĕрчĕллĕ тырăсене акса пĕтернĕ. «Свобода», «Соревнование», «Звезда», «Активист», «Гвардеец», Молотов, Ворошилов, Калинин ячĕсемпе тăракан колхозсем те паян-ыран пĕрчĕллĕ тырăсене акса пĕтереççĕ.

Вăрнар районĕ çураки планне 38,6 процент, Калинино районĕ 34,7 процент тултарнă.

Красноармейски районри «Красноармеец» колхоз, Чурачăк районĕнчи «Первое мая» колхоз (председателĕ Александров юлташ), Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Ильин юлташ), Чкаловски районри «Красный Октябрь» колхоз (председателĕ Булатов юлташ), Шупашкар районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Петрова юлташ) пĕрчĕллĕ тырăсене акса пĕтерпĕ.

Çураки ĕçĕсем уйрăмăнах Çĕмĕрле районĕнче начар хăвăртлăхсемпе пыраççĕ. Çак район паянхи кун тĕлне çураки планне пурĕ те 9.6 процент кăна тултарнă. Çавăн пекех Вăрмар, Тăвай, Улатăр, Йĕпреç тата Ишлей районĕсенче те çураки ĕçĕсем çителĕксĕр хăвăртлăхпа пыраççĕ. Çак районсем çураки планне пурĕ те 12 процентран пуçласа 14 процента çити кăна тултарнă.

Трактор бригадисем плана тултарнă

ВĂРНАР, майăн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Хĕрлĕ Çăран историллĕ çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, трактористсемпе трактористкăсем ăмăртса ĕçлеççĕ. Паянхи кун тĕлне МТС çураки планне 70 процент тултарнă, Пурĕ 1.600 гектар сухаланă. Митаков, Алексеев, Тойдеряков тата Николаев юлташсем ертсе пыракан трактор бригадисем çураки вăхăтĕнче тумалли ĕçсен планне ăнăçлă тултарчĕç. Çуракине тухнăранпа çак бригадăсенче кашни сменăрах урапаллă тракторпа 4 гектар вырăнне 9 гектар сухалаççĕ. Порфирьев, Капирова, Павлова трактористсем хăйсен нормине яланах икшер хут иртterсе тултараççĕ.

Ф. НИКОНОРОВ,
Вăрнар МТС-ĕн директорĕ.

Пĕрчĕллĕ тыр сене акса пĕтернĕ

СОВЕТСКОЕ, майăн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри нумай колхозсем çураки ĕçĕнче хастарлăн ĕçлеççĕ. «Сеятель», «Комбайн» колхозсем пĕрчĕллĕ тырăсене акса пĕтернĕ. Çак колхозсем сеялкăсемпе аниăн усă кураççĕ, çураки ĕçĕнче ĕçлекенсене уйрăм участоксем уйăрса парса ĕçлеттереççĕ.

И. АЛЕКСЕЕВ.

Сухаçăсем ăмăртса ĕçлеççĕ

ШЕНЛЕЙ. Районри пур колхозсенче те çураки пырать. Малта пыракан «МОПР», «Парижская Коммуна», «Большевик» колхозсем çуракине 7—8 кунта вĕçлессишĕн тăрăшаççĕ.

Санайкасси ял Советĕнчи «Труд» колхозра 1-мĕш бригада малта пырать. Ку бригадири М. Яичникова, Л. Кудряшов, М. Кудряшова, И. Иванова сухаçăсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем нормăна кулленех 115—120 процент тултараççĕ. Савăн пекех иккĕмĕш бригадăри И. Любимова, П. Яшков самăйăсем те ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Сухара пĕтĕмпе 19 лаша ĕçлет. Сухаçăсемпе аккаписем тата сӳрекенсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

И. ГРИГОРЬЕВ.

Майракалла шултăра выльăхсемпе ĕçлекенсене ĕçкунĕ мĕнле тӳлемелле

Çураки вăхăтĕнче уйхирсенче майракалла шултăра выльăхсемпе усă курни ситĕ кирлĕ ĕç пулса тăрать. Вăл çуркуннехи ĕççине кĕске вăхăтра иртterме май парать. Иртерех, тăпра нӳрлĕ вăхăтра акса хăварни вăйлă тырăнул туса илме пулăшать.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ сĕнĕ тăрăх, вăкăрсемпе ĕçлекен колхозниксене ĕç нормине лашасемпе ĕçлекеннисенчен икĕ хут сахалтарах памалла, анчах та ĕçкунĕсем вара лашасемпе ĕçлекеннисенни чухлех çырса памалла (нормăна тултарнă пулсан). Ĕнесемпе ĕçлекенсене—лашасемпе ĕçлекенсене панă норман виççĕмĕш пайне çеç памалла.

Сăмахран, икĕ лашапа кунне 1,2 гектар сухаламалли нормăна тултарнăшăн колхознике 1,5 ĕçкунĕ тӳлеççĕ пулсан, икĕ вăкăрпа ĕçлекенĕн 0,6 гектар, икĕ 2—3-шер гектар люцерна акма пăхаççĕ. Сысна ĕрчетес ĕçре ку мероприяти пысăк вырăн йышăнать. Пĕр гектар люцерна çинче çу каçиччен 35 сысна тăрантарса, кашни гектар пуçне 600-шер килограмм какай ытларах илме пулать.

Халĕ кашни колхозрах ферма çумĕнчи участоксене акмалли плана кашни ферма заведующийĕ, доярка, сысна пăхакан е ытти выльăх-чĕрлĕхсене пăхакансем патне çитеринне тĕрĕслесе тухмалла. Çапла тусан кăна фермăра ĕçлекенсем ферма çумĕнчи участоксене акма кирлĕ пулакан вăрлăхсене тата туртăм вăйне хатĕрлес тĕлĕшпе никенерех ĕçлеме пултараççĕ. Тымар-çимĕç вăрлăхĕсем çитменçĕрте колхозниксенчен сутăн е кивçен илес ĕçе организацилемелле.

Тымар-çимĕç вăрлăхĕсем хатĕрлесси нумай районсенче çителĕксĕр пырать-ха. Хăшпĕр районсем «Сортсемовощь» паракан вăрлăха та илсе пĕтермен. Муркаш районне кăшман вăрлăхĕ 20 центнер нанă. Анчах вăл ăна илсе пĕтермен. Кушлей районĕ 20 центнер вырăнне 1 центнер, Хĕрлĕ Чутайпа Сĕнтĕрвăрри районĕсем вара пурĕ те 20-шер килограмм кăна илнĕ.

Ферма çумĕнчи участоксем валли мĕнле çĕр уйăрмалла тата унта мĕнле культурăсем акмалла? Ферма çумĕнчи участоксем ферма сывăхнерех пулсан авăн. Ферма работникĕсем выльăхсене пăхнă вăхăтрах çав участоксенче те ĕçлеме пултарччăр. Кил вырăнĕсем пысăк пулнă пирки вĕсене касса илнĕ участоксене, пушă юлнă кил вырăнĕсене, сад пахчинчи йывăççем хушшисене тата пуçуçаврăнăшне пăсмасăрах ял сывăхĕнчи çĕрсене те ферма çумĕнчи участоксем валли уйăрма пулать.

Выльăх-чĕрлĕхсене пăхакан работниксен çав участоксенче тĕрлĕ культурăсем акса тумалла. Чăн малтанах çĕрулми ытларах лартмалла. Çĕрулми сыснасемпе ĕнесене, сурăхсене тата лашасене те ситермелли чи лайăх сĕткенлĕ апат пулса тăрать. Вăйсăр лашасене пĕçернĕ çĕрулми ситерсен, вĕсем ҫĕсах вăй илсе самăрланаççĕ. Сахăр кăшманĕпе ахаль кăшман та ĕне выльăхсемшĕн, лашасемшĕн, сыснасемшĕн тата ҫăхсемшĕн питĕ усăллă. Кăшмана кашни колхозрах гектартан 700—800 центнер туса илме пулать. Пĕр гектар çинчен пухса илнĕ кăшманна 18—20 ĕнене хĕл каçичченех тăрантса усрама пулать. Кăшмана тислĕк тăкса çĕмĕтнĕ лапăмрах вырăнсене, йăран хушшисене 50—52 сантиметр хăварса акмалла. Селькăпа акнă чухне виçĕ сотникне илсе, тăваттăмĕшне акмалла. Кăшман вăрлăхĕ «Сортсемовощь» складĕсенче сителĕклĕ. Çавăн пекех турнепс е кавăн аксан та лайăх. Кишĕр пур тĕрлĕ çамрăк выльăхсемшĕн те питĕ кирлĕ апат пулса тăрать, уйрăмăнах вăл пĕтĕ кĕсресемшĕн тата тихасемшĕн усăллă.

Тымар-çимĕçсем акас умĕн, вĕсене акмалли участоксене кĕркунне удобренине çемçетмен пулсан, калиллĕ удобренисемпе халĕ çемçетмелле. Çĕрулми лартакан вырăна кĕпе çемçетес пулать. Кĕпе перекетлĕ усă курас тесен, çĕрулми лартакан касса алăпа сапса пымалла. Ферма çумĕнчи участока акассинчен пуçласа пухса илинченех фермăра ĕçлекенсем çумне çирĕплетсе памалла. Ферма çумĕнчи участоксенче ĕçлеме вăкăрсемпе ĕнесем уйăрса памалла. Вĕсене кӳлсе ĕçлеме ĕç хатĕрĕсемпе ытти тĕрлĕ инвентарь хатĕрлемелле.

Республикăри чылай колхозсем онычĕ выльăхсемшĕн кавăн питĕ усăллă пулнине катартса парать. Унăн вăрлăхĕ кашни колхоз хуçалăхĕнчех пур. Кавăна ферма сывăхне, выльăхсене усăлма кăлармалли вырăнсенче акмалла, мĕншĕн тесен пур колхозсенче те тенĕ пекех çуллахи вăхăтра выльăхсене хире е вăрмана илсе кайнă пирки, çав вырăнсем пушă выртаççĕ. Кавăна чĕрлле те, пĕçерсе те ситерме пулать. Çĕрулми вăрлăхĕ çителĕксĕр колхозсем кавăна ытларах акмалла.

Çавăн пекех выльăхсемшĕн питĕ пахă культурăсенчен пĕри вăл вир пулса тăрать. Акма унăн вăрлăхĕ нумай кирлĕ мар. Вир калчине чеченке лариччен тата чеченке лартан та сыснасем юратса сиеççĕ. Вирĕн ешĕл калчинче сахăр нумай, çавăнпа та вăл сыснасемшĕн питĕ усăллă.

Кайăк-кĕшĕк пăхакансем нумаях мар пулсан та, вĕсен çулла ситерме пăрçа, салат, вир е ытти çавăн пек культурăсем акмалла. Нумай çул ӳсекен курăксемсĕр пуçне, çулла симĕсле çулса ситерме вика акас пулать. Çулса ситермелли викăна итем вырăнне тата кĕркуннеччен пушă выртакан ытти вырăнсене акмалла. Çулла ярăнне те, каçхине те колхоз ĕнисене ешĕл курăк ситермелле. Çакна ăна çирĕп йĕркене кĕртмелле.

Çаксемпе пĕрлех кашни колхозăн кăçат хăйне кирлĕ таран тымар-çимĕç вăрлăхĕсем туса илес задачăна лартмалла.

Ферма çумĕнчи участоксене акас тата унăн культурăсене пăхса çитĕнтерес ĕçе организацилеме колхозсене ялхуçалăх специалисчĕсем куллен пулăшса пыма тивĕçлĕ. Выльăх апачĕн базине çирĕплетсен кăна СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Государствăн колхозсенче, совхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатмалли 1945 çулхи планĕ çинчен» йышăннă постановление ăнăçлăн пурнăçлама май пуррине асра тытса, партине совет тата çĕрĕç органĕсен ферма çумĕнчи участоксене акса хăварас ĕçе кирлĕ пек ерт пымалла.

Г. МАРТЫНОВ,
ВКП(б) Обком секретарĕн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе ĕçлекен заместителĕ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

НИМĔÇСЕН ÇУРÇĔР-ХĔВЕЛАНĂÇ ГЕРМАНИРИ, ГОЛЛАНДИРИ ТАТА ДАНИРИ ÇАРĔСЕМ ХИРĔÇ ТĂМА ПĂРАХНĂ

ЛОНДОН, майăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедицилле вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: истребительбомбардировщиксем нимĕç транспорчĕсен колоннисене тапăннă. Çав тапăнусенче Фленсбург, Киль, Неймюнстер тата Любек хулисем хушшинчи районра 1.200 машинăпа лава яхăн пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ. Ракетăлă установкăсем лартнă истребительсем, çаван пекех тата истребительбомбардировщиксем Фленсбург, Киль, Экернферде, Любек хулисем сывăхĕнче, çаван пекех тата Киль бухтипе Любек бухтинче нимĕçсен пысăк, вăтам тата пĕчĕк судписене атакăланă. Тăшманăн 9 суднине шыва путарнă, 100 суднине ытла сиенленĕ.

Кăнтăр Германире союзниксен çарĕсем Берхтесгаденран 45 километр çурçĕр-хĕвеланăçнерехре ларакан ял патне çитнĕ, Австрири Альп тăвĕсем çинче союзниксен çарĕсем хĕвеланăç енчен пырса Инсбрук хули патне сывхараççĕ. Хула парăнасси çинчен пынă каласусем ним усăсăр иртнĕ хыççăн тăшман хытă хирĕç тăрса çапăçма пуçланă.

ЛОНДОН, майăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ çумĕнчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: нимĕçсен çурçĕр-хĕвеланăç Германири çарĕсем хирĕç тăма пăрахнă.

Монгомери генерал Эйзенхауэр генерала çапла пĕлтернĕ: нимĕçсен Голландири, Çурçĕр-хĕвеланăç Германири, Данири тата Гельголанд утравĕпе Фриз утравĕсем çинчи çарĕсем союзниксен 21-мĕш армин ушкăнне парăннă. Вĕсем парăнни Лондон вăхăчĕпе майăн 5-мĕшĕнче 8 сехетре вăя кĕрет. Çурçĕр-хĕвеланăç флангра хальхи вăхăтра 21-мĕш армин ушкăнне хирĕç тăнă çарсем парăннă.

Нимĕçсен çурçĕр-хĕвеланăç Германири çарĕсене Эрнст фон Буш генерал-фельдмаршал командир пулса ертсе пынă.

Югославири çапăçусем

БЕЛГРАД, майăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Апрелĕн 30-мĕшĕнче Югослави çарĕн генеральнăй штабĕ çапла пĕлтернĕ: тăшманăн пысăк вăйĕсемпе сăртлă вырăнти йывăр условисенче хаярăн çапăçнă хыççăн Югослави çарĕсем тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ позицийĕсене татнă та Триест хулине вăркăнса кĕрсе кайнă, хулана тăшмантан туртса илнĕ.

ЛОНДОН, майăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерĕве панă. Унта çапла каланă: союзниксен çарĕсенчи Çĕнĕ Зеланди часĕсем Триест портне çитсе кĕнĕ. Германин Италири çарĕсем пĕр каласса тăмасăр союзниксене парăнасси çинчен тунă килĕшӳре çав порт парăнасси çинчен каламан пулнă. Çĕнĕ Зеланди часĕсем Триест хулине пырса кĕнĕ вăхăтра Тито маршалăн Югослави çарĕсем порта йышăннă пулнă.

БЕЛГРАД, майăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави çарĕн генеральнăй штабĕн пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: 11 кун хушши урамсенче хаярăн çапăçнă хыççăн Югослави часĕсем Фиуме порчĕне хулине ирĕке кăларнă. Çапăçусенче нимĕçсен икĕ дивизине тата ытти темиçе часне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă.

Югославин тинĕс-çар флочĕн часĕсем Истри районне ăнăçлăн десант антарнă та 4 кун хушши хаярăн çапăçнă хыççăн тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă, Пола хулине портне (пысăк суту-илӳпе тинĕс-çар портне) ирĕке кăларнă. Тăшман гарнизонне пĕтĕмĕшпех вĕлерсе пĕтернĕ. Çапла ĕнтĕ, Истри районĕпе Словени Приморьине оккупантсенчен пĕтĕмĕшпех тасатнă.

ГИТЛЕРАН ПОРТУГАЛИРИ ТАРÇИСЕМ ХУЙХА ӲКНĔ

ЛОНДОН, майăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлер вилни çинчен пĕлтернĕ май Рейтер агентствин Лиссабонри корреспонденчĕ çапла калать: «Енер Португали премьер-министрĕ Салазар. Гитлер вилни пирки Португали хуйхăрни çинчен пĕлтерме, ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин чиновникне Германи миссине янă.

Американецсен Англири радиопередатчикĕ çапла пĕлтерет: Гитлер вилнĕ пирки Португали правительстви Португалире икĕ эрне хушши траур пулмалли çинчен пĕлтернĕ. Лиссабонра влассем пур çĕрте те траурлă ялавсем çакса хунă. Мадридри «АБЦ» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Испанири франкистсен фаланги ĕнер Мадридра Германи посольствин çурчĕ умĕнче манифестаци тунă, çапла туса вĕсем Германин пуçкасаканĕ вилнĕ пирки хăйсем хуйхăрни çинчен пĕлтересшĕн пулнă.

АРГЕНТИНĂРА БЕРЛИН ПАРĂННИНЕ УЯВЛАМА ЧАРНĂ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Аргентинăра Берлин парăнинине уявламан, мĕншĕн тесен правительство çав паллă событие уявлама чарса лартнă. Аргентинăри радио халăха Берлин парăнни çинчен пĕлтермен.

ЛОНДОН, майăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, паян Буэнос-Айрес хулинче Аргентина çарĕсемпе полици урама тухнă, çапла вĕсем Берлина совет çарĕсем туртса илнĕ май халăха демонстрацисем тума ирĕк паман. Çарсемпе полици урамсем тăрăх асăрхаса çӳренĕ, хаçатсен редакцийĕсем тата тĕрлĕ учрежденисем патĕнче хурал тăратнă.

АРГЕНТИНĂРА ПРАВИТЕЛЬСТВАНА ХИРĔÇ ТАРАССИ ÜССЕ ПЫРАТЬ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Аргентинăран килекен хыпарсем кăтартнă тăрăх, унта правительствăна хирĕç тарасси ӳссе пырать.

Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Аргентинăра фашистсене хирĕç вăрттăн кĕрешекен «Патрна либре» ятлă вăйлă организацин делегацийĕ пичетлесе кăларнă декларацире çапла калана: «Аргентинăн хальхи правительстви Аргентинăри пĕртен-пĕр национал-фашистла элемент пулса тăрать, вăл тоталитарнăй (пĕтĕмĕшле) системăн меслечĕсемпе усă курать».

Балтиморта тухакан «Сан» хаçатăн корреспонденчĕ Аргентинăри радикалсен партийĕн лидерĕпе Сантандерпа калаçнă. Сантандер çапла каланă: «Аргентинăна ӳнĕтлесе йĕркене кĕртме тăрăшакан политика «пĕтерсе лартакан политика пулса тăма пултарать», тенĕ.

САН-ФРАНЦИСКĂРИ КОНФЕРЕНЦИРЕ

САН-ФРАНЦИСКО, майăн 3-мĕшĕ. (ТАСС специнфĕ). Конференцин тăватă комиссийĕ организацийĕ ĕçсем тунă вăхăтра конференци лидерĕсем малалла канашлаççĕ, вĕсем Думбартон-Окса йышăннă программăна тӳрлетме сĕннисем пирки май килнĕ таран ытларах калаçса татăлма тăрăшаççĕ. В. М. Молотов, Стеттиниус, Иден тата Сун Цзы-вэнь паян та канашланă. Совет Союзĕн, Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Пĕрлешӳллĕ Королевствăн, Китайăн тата Франци делегацийĕсен представителĕсем опека ыйтăвне малалла сӳтсе-явма пухăнаççĕ.

Чăваш АССР Прокуратуринче

Çураки вăхăтĕнче 40 гектар тасамар тата кондициллĕ мар вăрлăх акнăшăн Шăхасан районĕнчи «Заря» колхозăн председательне Никитина уголовнăй йĕркепе ответ тыттарма суда панă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăвашсен ялхуçалăх институтне çакăн пек работниксем кирлĕ: кассир, бухгалтер, завхоз, тонна çурă туртакан грузовик шоферĕ, швейцарсем, техничкăсем, дворниксем, хуралçăсем, тракторист, пушар сыхлавĕн начальникĕ, пожарнăйсем. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Волгостроя, 4, Дирекция.

Ферма çумĕнчи участоксăр пĕр колхоз та ан пултăр

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Государствăн колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатмалли 1945 çулхи планĕ çинчен» йышăннă постановленире советпа парти тата çĕрĕç органĕсем умне, 1945 çулта выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстересшĕне пĕрлех, унăн тухăçлăхне хăпартас, выльăхсем валли çителĕклĕ апат-çимĕç хатĕрлес тĕлĕшпе те пысăк задача лартрĕç. Çак питех те паха задачăна пурнăçлас тесен, çуракинче нумай çул хушши ӳсекен курăксем тата выльăх-чĕрлĕх апачĕ валли ытти культурăсем акмалли плана пусуçаврăнăшпе тăрăх ытлашшипех тултарассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле.

Выльăх-чĕрлĕхшĕн аха апат пулса тăракан çĕрулмине ытларах лартмалла. Унсăр пуçне, сĕткенлĕ апат-çимĕç валине тăвас шутпа, кашни колхозрах ферма çумĕнчи участоксене 3—5 гектар чухлĕ акса хăвармалла. Çав участок çинчи тырпулсемпе çимĕçсене пĕтĕмпех фермăра ĕçлекенсен вăйĕпе акса тумалла. Унсăр пуçне ферма çумĕнчи участокра кашни лаша пуçне 0,10 гектар чухлĕ кишĕр, кăшман тата çĕрулми лартмалла. Унта конюхсемпе ездовойсем ĕçлемелле. Çав колхозниксене, ферма çумĕнчи участокра ĕçленĕмĕн ĕçкунĕ шутласа панисĕр пуçне, планран ытлашши туса илнĕ тымар-çимĕçсемпе çĕрулмин виçĕ пайĕнчен пĕр пайне памалла. Конюхсем тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен сыснасем акса çитĕнтернĕ пĕтĕм тырпулпа ытти çимĕçсем ăйăтах выльăх-чĕрлĕхе çитернĕ çĕре каймалла.

Иртнĕ, 1944 çулта пирĕн республикăри нумай колхозсем ферма çумĕнчи участоксенчен чылай тырпул, тымар-çимĕç, çĕрулми пухса илчĕç. Сакă вăл фермăсенчи выльăхсене тăрантарас ĕçе лайăхлатма пулăшрĕ. Чылай районсенчи партипе совет тата çĕрĕç органĕсем, çак ĕçе пысăк вырăна хурса, ферма çумĕнчи участоксене организацилес тĕлĕшпе кăçал та пикенсе ĕçлеççĕ. Ку тĕлĕшпе Вăрмар районĕ паха тĕслĕхсем кăтартать. Вăрмар районĕнчи колхозсем иртнĕ çул та ферма çумĕнчи участоксене 200 гектар вырăнне 301 гектар чухлĕ акса хăварнă. Вĕсем выльăхсем валли сĕткенлĕ апатсем туса илнĕ. Кунта ферма çумĕнчи участоксăр пĕр колхоз та пулман. Пĕтĕм районĕпе иртнĕ çул ферма çумĕнчи участоксенчен 12.320 центнер тымар-çимĕç, 9.960 центнер çĕрулми, 3.270 центнер силос сĕлĕпе вика ути, 515 центнер силос хывмалли курăксем пухса илнĕ. «Малăк» колхозри сысна ферминче ĕçлекенсем Кузьмина, Анисимова, Герасимова тата Петроградская юлташсем ферма çумĕнчи участокран кашни гектартан 180-шар центнер çĕрулми пухса илнĕ. Çав юлташсене, ĕçкунĕ тӳлениçĕр пуçне, кашнинех 13-шер пат çĕрулми хушса панă. Районĕпе пурĕ выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсене 24 сыпăна ĕçкунĕ сумне хушса тӳленĕ.

Ферма çумĕнчи участоксене акма хатĕрленес тĕлĕшпе районра кăçал та тимлĕн ĕçленĕ. Райисполкомпа ВКП(б) райкомĕ ялхуçалăх специалисчĕсемпе пĕрле çав вăйтăва колхоз председательĕсен тата ферма заведующийĕсен канашлăвĕнче сӳтсе-явнă. Ферма çумĕнчи участоксене акмалли плана кашни колхоз тата ферма заведующийĕ патне çитернĕ. Ферма çумĕнчи участоксене акас пирки кашни колхозрах конкретлă ĕç планĕ тунă. Ку ĕçре колхозсене ялхуçалăх специалисчĕсем пулăшаççĕ. Иртнĕ çулхи опыта шута илсе, кунта тымар-çимĕçсемпе çĕрулмисĕр пуçне сысна фермисем çумĕнче выльăхсене тăрантарас ĕçе лайăхлатма пулăшрĕ. Чылай районсенчи партипе совет тата çĕрĕç органĕсем, çак ĕçе пысăк вырăна хурса, ферма çумĕнчи участоксене организацилес тĕлĕшпе кăçал та пикенсе ĕçлеççĕ. Ку тĕлĕшпе Вăрмар районĕ паха тĕслĕхсем кăтартать. Вăрмар районĕнчи колхозсем иртнĕ çул та ферма çумĕнчи участоксене 200 гектар вырăнне 301 гектар чухлĕ акса хăварнă. Вĕсем выльăхсем валли сĕткенлĕ апатсем туса илнĕ. Кунта ферма çумĕнчи участоксăр пĕр колхоз та пулман. Пĕтĕм районĕпе иртнĕ çул ферма çумĕнчи участоксенчен 12.320 центнер тымар-çимĕç, 9.960 центнер çĕрулми, 3.270 центнер силос сĕлĕпе вика ути, 515 центнер силос хывмалли курăксем пухса илнĕ. «Малăк» колхозри сысна ферминче ĕçлекенсем Кузьмина, Анисимова, Герасимова тата Петроградская юлташсем ферма çумĕнчи участокран кашни гектартан 180-шар центнер çĕрулми пухса илнĕ. Çав юлташсене, ĕçкунĕ тӳлениçĕр пуçне, кашнинех 13-шер пат çĕрулми хушса панă. Районĕпе пурĕ выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсене 24 сыпăна ĕçкунĕ сумне хушса тӳленĕ.

Ферма çумĕнчи участоксене акма хатĕрленес тĕлĕшпе районра кăçал та тимлĕн ĕçленĕ. Райисполкомпа ВКП(б) райкомĕ ялхуçалăх специалисчĕсемпе пĕрле çав вăйтăва колхоз председательĕсен тата ферма заведующийĕсен канашлăвĕнче сӳтсе-явнă. Ферма çумĕнчи участоксене акмалли плана кашни колхоз тата ферма заведующийĕ патне çитернĕ. Ферма çумĕнчи участоксене акас пирки кашни колхозрах конкретлă ĕç планĕ тунă. Ку ĕçре колхозсене ялхуçалăх специалисчĕсем пулăшаççĕ. Иртнĕ çулхи опыта шута илсе, кунта тымар-çимĕçсемпе çĕрулмисĕр пуçне сысна фермисем çумĕнче

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСĔМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31. 3—99, издательство конторин — 0—23.

НТ 00104

Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000